Паян - Воспитательсен тата шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче ĕçлекенсен кунĕ

Ырă кăмăлпа чун ăшши – ачасем валли

Муркаш районĕнче шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсем пурĕ 30 ĕçлеççĕ. Вĕсенчен 15-шĕ – ача сачĕсем, 5-шĕ – пуçламăш шкул-ача сачĕсем, 4-шĕ – шкулченхи ушкăнсем тата 6-шĕ – пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсем çумĕнчи кĕске вăхăтпа ĕçлекен ушкăнсем.

Паянхи кун тĕлне çӳлерех асăннă учрежденисене пурĕ 1370 ача çӳрет. Кăçалхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 1337 ача пулнă. Ку вăл «Путенере» ясли ушкăнне, «Колокольчикра» шкулченхи ушкăна, Шетмĕпуçĕнчи шкул çумĕнче кĕске вăхăт ушкăнне уçнипе тата Атапайри кĕске вăхăт ушкăнĕ тулли ĕç вăхăчĕ çине куçнипе пулчĕ.

2009 çулта ача сачĕсене çӳрекенсен йышĕ тата ӳсессе шанатпăр. Мĕншĕн тесен çĕнĕ çултанпа «Малыш», «Азалия» тата «Буратино» ача сачĕсем çĕнĕ ушкăнсем уçма хатĕрленеççĕ. Хальлĕхе ача сачĕсене çӳрекенсем пурĕ ачасен 92 проценчĕпе танлашаççĕ. Каламалла, ачасен шучĕ те ялсенче чакса пырать. Мĕншĕн тесен çамрăксем яла юласшăн мар. Çапла Çатракасси, Турай, Хорнуй, Юнкă тата Ярославка ял тăрăхĕсенче ачасем сахал çуралаççĕ. Хăшĕсенче çеç хушăнни палăрать.

Раççей Федерацийĕн Правительствин 2006 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче кăларнă 849 № Постановленийĕ те садиксене çӳрекенсен шучĕ ӳсни çине хăй витĕмне кӳчĕ. Ачасене садиксене янăшăн компенсаци парасси пирки каланă унта. Ашшĕ-амăшĕ вăхăтра укçа тӳлесе тăрсан çак компенсаци ятарлă счет çине куçса пырать. Укçан пĕр пайĕ каялла таврăнать. Ку – питĕ пысăк пулăшу.

Инçетри ялсенчен ача садне çӳресси те йывăрлăхсем çуратать. Шкул автобусĕсемпе вара пĕчĕк ачасене садике турттарма юрамасть. Çак сăлтава шута илсе Йӳçкассинчи «Василек» ача садĕнче 2007 çулхи ноябрь уйăхĕнчен пуçласа талăкĕпе ĕçлекен ушкăн йĕркеленĕ. Ку вĕренӳ çулĕнче «Малыш» ача садĕнче те çакăн пек ушкăн ĕçлеме тытăнĕ. Çĕнĕ ушкăнсем уçăлни садик ертӳçисем ачасемшĕн тăрăшнине тата ашшĕ-амăшĕсене хирĕç кайнине кăтартса парать.

Муркашри «Путене» тата «Солнышко» ача сачĕсенче вырăн çитменни пирки те нумайăшĕ пĕлет ĕнтĕ. Ку ыйтупа та паян район администрацийĕн вĕренӳ пайĕ ĕçлет.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче ашшĕ-амăшĕсем валли татах та савăнăçлă хыпар пур. Кĕçех Орининти «Золушка» 12 сехетпе ĕçлеме тытăнĕ. «Лебедушка» ача сачĕн пĕр ушкăнĕ те çак вăхăтпа ĕçлĕ.

Юлашки çулсенче шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче педагогсен ăсталăх шайĕ палăрмаллах ӳсрĕ. Хальлĕхе районта пурĕ 159 педагог вăй хурать, вĕсенчен 15-шĕ - садиксен ертӳçисем, 127-шĕ – воспитательсем, 17-шĕ – музыка вĕрентекенĕсем тата 1 логопед. 98 педагог аслă пĕлӳ илнĕ. Ыттисем те çак çулпах каяççĕ темелле: паянхи куна тепĕр 9 педагог заочно майпа аслă пĕлӳ илет. Воспитательсемпе ертӳçĕсем хушшинче опытлă ĕçченсем сахал мар – 1 категориллĕ 54 педагог, 2 категориллĕ – 55. Çак хисеп тата ӳсессе шансах тăратпăр.

Садиксенче ĕçлекенсем çулсеренех тĕрлĕ конкурссене хутшăнса лайăх кăтартусем тăваççĕ. Сăмахран, О.В. Прокопьева («Солнышко») 2007 çулта Чăваш Республикин Президенчĕн хавхалантару укçине илме пултарчĕ. Кăçал çак 10 пин тенкĕне О.Г. Петрова («Солнышко») тивĕçрĕ. Ольга Германовна Республикăра иртнĕ ытти конкурссенче те çĕнтерӳсем пĕрре мар турĕ. Çакăн пек хастар педагогсем ĕçтешсене те, ача сачĕсене çӳрекенсене те малтан мала çитĕнӳсем патне утма хистеççĕ.

Çак ăсталăха пысăк шайра тытса пырас тата ӳстерес тĕллевпе района методпĕрлешӳсем ĕçлеççĕ. Вĕсем вара тĕрлĕ енлĕн пулса пыраççĕ: семинарсем, практикумсем, докладсем тата ытти те.

Ача сачĕсенче тăван тавралăхăн историйĕпе, культурипе, йăли-йĕркисемпе паллаштарассипе япăх мар ĕçлесе пыраççĕ. Çапла вара ачасем чăвашлăх пирки пĕчĕкренех пĕлсе ӳсеççĕ. «Улыбка», «Березка», «Путене», «Тюльпан», «Солнышко» ача сачĕсенче пĕчĕк музейсем те йĕркелеме пултарчĕç.

Сывлăха пĕчĕкренех упрасси çине те садиксенче тимлĕх уйăраççĕ. Тĕслĕхрен, «Малыш» ача садĕнче çак ыйтăва экологи тата вĕрентӳ ыйтăвĕсемпе пĕрле тĕпе хурса ĕçлеççĕ.

Тĕрлĕ программăсене пурнăçа кĕртсе пыраççĕ педагогсем: «Сообщество», «Здоровье» тата ыт. те.

Ачасем те интереслĕ конкурссене хутшăнса хăйсене лайăх енĕпе кăтартаççĕ. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче республика шайĕнче иртнĕ «Нет листвы осенней краше» конкурсра пирĕн районти ачасем мала тухма пултарчĕç: Борис Борисов («Путене») – 1-мĕш вырăн, Вероника Николаева («Малыш») – 2-мĕш вырăн, Роман Иосифов («Солнышко») – 3-мĕш вырăн.

«Эпĕ – тĕпчевçĕ» конкурсра «Путенери» Александр Попов палăрма пултарчĕ.

Пушара хирĕç кĕрешес тематикăпа ирттернĕ конкурса «Мечта», «Солнышко», «Золушка», «Путене», «Малыш», «Улыбка», «Родничок» ача сачĕсем активлă хутшăнчĕç.

Вĕрентӳ округĕсем (пурĕ 4) те иртнĕ çул аван ĕçлерĕç. Г.А. Шолкова, К.П. Маркова, М.В. Иванова тата Р.Г. Шапошникова (округсене ертсе пыракансем) тĕрлĕ мероприятисем ирттерессипе тимлерĕç.

Малалла та лайăх ĕçлесе пыма вара пурлăхпа техника базине лайăхлатмалла. Кунсăр пуçне хамăр ума районти пур ачана та садике çӳрекенсен йышне кĕртес тĕллеве те тăратрăмăр. Кашни ача садĕнче ашшĕ-амăшĕсемпе ĕçлеме консультаци пункчĕсене ĕçлеттерессипе те тăрăшмалла. Муркашра тепĕр ача сачĕ, Мăн Сĕнтĕрте «Мечта» ача сачĕ çумне пристрой тăвасси пирки те ыйтусем тухса тăчĕç. Вĕсене татса пама пурин те вăй-хал çиттĕрччĕ.

В. РОМАНОВА,
район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн методисчĕ.

Старта чĕнетпĕр

Çуллахи спорт сезонне хупнă ятпа районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн ирттерекен кĕркуннехи çăмăл атлетика кросĕн ПОЛОЖЕНИЙĔ

1. Тĕллевĕсемпе задачисем

Çуллахи спорт сезонне хупнă ятпа районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат парнисене çĕнсе илессишĕн кĕркуннехи çăмăл атлетика кросне çăмăл атлетикăна ытларах сарас, сывă пурнăç йĕркине çирĕплетес тата шкул ачисем хушшинче чупассипе шанăç çуратаксене тупса палăртас тĕллевпе ирттереççĕ.

2. Ăмăрту ирттермелли вырăн тата вăхăт

Ăмăрту Муркашри стадионта 2008 çулхи октябрĕн 3-мĕшĕнче пулать, 13 сехетре пуçланать.

3. Ăмăрту участникĕсем тата программа

Ăмăртăва Муркаш районĕнчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен пĕрлештернĕ командисем хутшăнаççĕ.

Командăсен составĕ:

1. СОШ – 12 çын (6 яш, 6 хĕр тата 1 представитель).

2. ООШ – 6 çын (3 яш, 3 хĕр тата 1 представитель).

Участниксен ӳсĕмĕ тата чупмалли дистанци:

1991-1992-1993 ç.ç. – яшсем 3 км., хĕрсем 2 км.

1994-1995 ç.ç. – яшсем 2 км., хĕрсем 1 км.

Асăрхаттарни: 1991 çулта çуралнисен шкул ачи пулнине ĕнентерекен справка пулмалла.

4. Командăсене йышăнмалли тата наградăламалли условисем

Ăмăртăва ирттерме, çĕнтерӳçĕсене наградăлама тата судьясен коллегине тӳлеме каякан тăкаксене районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ саплаштарать.

Ăмăрту участникĕсене ăмăртăва хутшăнма майсем туса парассипе каякан тăкаксене хăйсен организацийĕсем саплаштараççĕ.

5. Çĕнтерӳçĕсене палăртасси

Команда зачечĕн шутне кашни ӳсĕм ушкăнĕнчи 3 чи лайăх результата кĕртеççĕ.

6. Наградăласси

1-мĕш вырăн йышăннă командăна диплом, районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн куçса çӳрекен кубокне, хаклă парне параççĕ. 2–3-мĕш вырăн йышăннă командăсене дипломсем тата хаклă парнесем параççĕ.

Призлă вырăн йышăннă участниксене Хисеп грамотисем тата медальсем параççĕ.

7. Заявкăсем тăратасси тата документаци

Ăмăртăва хутшăнасси пирки октябрĕн 3-мĕшĕччен район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайне 2–24–65, 2–21–48 телефонсемпе шăнкăравласа пĕлтермелле.

Ăмăрту ирттернĕ кун команда представителĕ судьясен коллегине ятран çырнă заявка тăратать. Ун çинче ертӳçĕ тата врач алă пуснисем пулмалла.

ЗАО «МСО «Моргаушская» предлагает квартиры в д. Москакасы Моргаушского района ЧР:
- однокомнатные квартиры - площадью от 40 кв. м.
- двухкомнатные квартиры - площадью от 61 кв. м.
До 1 октября 2008 года цена за 1 кв. м. 22 000 рублей.
Требуются на работу рабочие строительных специальностей: сварщики, электрики, плотники, столяры. Оплата своевременная.
Обращаться в ЗАО «МСО «Моргаушская», д. Юнгапоси Моргаушского района ЧР. Тел.: 32-2-23 (бухгалтерия), 2-21-19 (приемная). 4-4.

ИП Ершов А.В. делает на заказ банные печи любой формы, а также гаражные, уличные ворота. Продает угольники, швеллера, трубы на забор и ворота. Доставка. Обращаться по тел.: 8-919-655-21-51 (Моргауши, плодокомбинат). 2-3.

Ноябрь пуçламăшĕнче пĕрремĕш пăруламалли ăратлă ĕне сутатпăр. Хакĕ каласса татăлнă тăрăх. Ыйтса пĕлмелли телефон: 8-927-844-84-18. 2-2.

Продается трехкомнатная квартира в с. Моргауши. Индивидуальное отопление. Кирпичный дом. Тел.: 8-927-667-24-31, 8(83541)37-24-31. 2-2.

Пĕлтерӳсем. Объявления

Администрация Моргаушского района сообщает, что в связи с выявленной неточностью отменяется прием заявок по объявлению: опубликованному в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 27.08.2008 г. № 64 (7595) о наличии свободного земельного участка к распределению на праве аренды, для ведения сельскохозяйственного производства, из земель сельскохозяйственного назначения, с кадастровым номером 21:17:021001:416, местоположение: участок расположен: Ильинское сельское поселение, территория землепользования СХПК «Хлебороб» в северной части квартала 21:17:021001, площадью 35 га.

Продается дом с земельным участком и с надворными постройками в с. Моргауши (газовое отопление, водопровод, до дому асфальт). Тел.: 8-909-305-89-33.

ООО «Лотос» требуются: повара, продавец-кассир, уборщица. Адрес: д. Рыкакасы Моргаушского района. Тел.: 67-3-08, 8-927-848-84-30. 1-2.

Меняю или продаю однокомнатную квартиру в селе Большой Сундырь на однокомнатную квартиру в селе Моргауши. Тел.: 8-937-370-93-17.

Продается двухкомнатная квартира площадью 44,1 кв. м. с надворными постройками по ул. 50 лет Октября. Тел.: 8-927-992-17-09.

Требуются каменщики в г. Москву. Кладка 1 куб. м. - 1300 руб. Питание и проживание бесплатное. Обращаться по тел.: 8-906-382-38-75. Олег.

Спутниковые антенны ТРИКОЛОР с установкой, регистрацией и обслуживанием. Тел.: 8-905-345-77-19. 1-5.

КПКГ «Агрокредит» принимает сбережения от пайщиков, выдает займы пайщикам. Ждем вас по адресу: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 2-18-13, 8-927-995-03-41. 17-20.

ИП Баранов Э.И. продает строительные материалы: доски хвойные обрезные, брусья, металл-швеллеры, угольники, трубы, цемент, шифер. Обращаться в «Моргаушагропромснаб» или по тел.: 8-903-346-40-58. 2-5.

Загружаю, перевезу, разгружаю. Кран - 2,8 т., борт – 5 т. Продаю: кирпич любой, блоки, пеноблоки, кольца колодезные, шифер, цемент. Тел.: 8-903-357-46-75. 4-7.

Продаю обрезные, необрезные доски от 2 м. до 6 м., штакетник, горбыль. Все в кредит!!! Трубы б/у. Дрова обрезки бесплатно!!! (На территории «Моргаушрайбыт»). Тел.: 8-905-345-31-09. 9-10.

РАБОТА ВО ВРЕМЯ ОТПУСКА
При желании может стать постоянной
Выбор – за Вами!
Нам нужны для Сургутского филиала клиники:
прогрессивно мыслящие врачи, медсестры, массажисты.
Оплата труда – сдельно-премиальная.
Требования к кандидатам:
– профессиональное образование;
– коммуникабельность;
– возраст значения не имеет.
РАБОТЕ МЫ ВАС НАУЧИМ.
Коучинг – обучение на рабочем месте.
Мы предоставляем вам возможность:
– зарабатывать;
– развиваться профессионально;
– быть здоровым;
– увидеть другой менталитет, улучшить собственное мироощущение.
Дополнительные преимущества:
– проживание за счет работодателя;
– оплачивается проезд до места работы.
ООО «Клиника доктора Остроносовой», запись на собеседование по тел.: 66-22-63, 8-903-359-38-25.

МИР окон и дверей ☎29-80-60
ОКНА пластиковые
Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX Thyssen ФАВОРИТ KBE NOVOTEX
от ведущего производителя
Чувашии теперь...
в МОРГАУШАХ
Здание "СЕЛЬХОЗТЕХНИКА", 2эт
8-927-669-80-60
Набор по уходу за окнами – в подарок! Скидка 20-25 %.

Требуются рабочие на строительство коттеджа. Профессия: монолитчики – оплата сдельная; разнорабочие - оклад 25000 руб. Тел.: 8-906-304-97-43, 8-960-032-94-24. 3-3.

Халăхран лайăх хакпа ĕне, вăкăр, тына ашăн тата чĕрĕ виçепе туянатпăр. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 3-4.

УВАЖАЕМЫЕ ПАССАЖИРЫ!
В билетной кассе «Никита» вы можете приобрести билеты на ежедневные рейсы «Чебоксары–Москва». Время отправления из с. Моргауши в 20-00 ч.
Комфортабельные автобусы АН 303, АН 577, АН 006, АН 255, АН 066 следуют до ст. метро Черкизово, ст. метро Измайловская. 11-я поездка – бесплатная!

Муркаш ял тăрăхĕн администрацийĕ Çурлатăри культура çурчĕн ертӳçи Р.П. Александрован юратнă ывăлĕ
АЛЕКСЕЙ
сарăмсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе, тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

Гл. редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни - 2-12-82, экономики - 2-11-38.
Факс: 2-11-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Объем 1 усл. печатный лист.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 26.09.2008 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3594.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.